28-мĕш çул тухăть. Хакĕ 20 тур.

1945
АПРЕЛЬ
28
ШАМАТКУН
81(6832) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, вĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН

Çапăçури çарсене панă

ПРИКАЗĔ

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем тата пирĕнпе союзлă Англипе Америка çарăсем, хĕвелтухăçпе хĕвеланăç енчен пырса çапса, нимĕç çарĕсен фронтне икĕ пая çурса пăрахнă, вара апрелĕн 25-мĕшĕнче, 13 сехет те 30 минутра, Германин вăтаçĕрĕнче, ТОРГАУ хули районĕнче пĕр-пĕринпе пĕрлешнĕ. Çапла вара, Сурçĕр Германири нимĕç çарĕсем Германин кăнтăр районĕсенчи нимĕç çарĕсенчен татăлса кайнă.

Тунă çĕнтерĕве палăртса хăварас тесе тата çав историллĕ ĕçе чысласа, паян, апрелĕн 27-мĕшĕнче, 19 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, виççĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм тăватă хут пĕр харăс персе, Украинăри 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене тата пирĕнпе союзлă Англипе Америка çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Ирĕклĕхе юратакан халăхсем Германие çĕнтересси сывă пултăр!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи апрелĕн 27-мĕшĕ. № 346.

И. В. Сталин, У. Черчилль тата Г. Трумэн радиопа чĕнсе калани

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем апрелĕн 25-мĕшĕнче, Германи вăтаçĕрĕнче, Торгау хули районĕнче, пирĕнпе союзлă Англипе Америка çарĕсемпе пĕрлешнине яланлăха палăртса хăварас тесе, СССР, США тата Великобритани радиостанцийĕсем апрелĕн 27-мĕшĕнче И. В. Сталин, У. Черчилль тата Г. Трумэн чĕнсе каланисене панă. (ТАСС).

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. В. Сталин Хĕрлĕ Çара тата союзниксен çарĕсене чĕнсе калани

«Совет Правителььсви ячĕпе эпĕ Сире, Хĕрлĕ Çарпа пирĕн союзниксен çарĕсен командирĕсемпе боецĕсене, чĕнсе калатăп.

Европăра халăхсене ирĕке кăларасшăн вăрçакан союзлă державăсен çĕнтерӳллĕ çарĕсем Германи çарĕсене аркатса тăнрĕсте Германи территорийĕнче пĕрлешрĕç.

Пирĕн задачăпа пирĕн тивĕçлĕх тăшмана пуçĕпех çапса вĕлересси, ăна хăйĕн хĕçпăшалне пăрахтарасси тата пĕр сăмахсăрах парăнтарасси пулса тăрать. Хамăн халăх умĕнчи тата ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем умĕнчи çав задачăпа çав тивĕçлĕхе Хĕрлĕ Çар вĕçне çитичченех пурнăçа кĕртĕ.

Эпир хамăр союзниксен паттăр çарĕсене, халĕ Германи çĕрĕ çинче совет çарĕсемпе сумма-сумăн тăраканскерсене тата хăйсен тивĕçлĕхне вĕçне çитичченех пурнăçа кĕртме хатĕр тăраканскерсене, саламлатпăр».

Премьер-министр Черчилль радио тăрăх чĕнсе калани

«Нумай походсем тунă хыççăн, çĕр çинче тата тинĕссем çинче йывăр ĕçсем туса ирттерсе çĕнтерӳсем тунă хыççăн, нумай çапăçусен хирĕсем тăрăх утса тухнă хыççăн, аслă союзниксен çарĕсем Германи урлă каçрĕç те пĕр-пĕрне тĕл пулса алă панĕç. Халĕ ĕнтĕ вĕсен задачи—Германин вăрçăра хирĕç тăракан вăйĕсен мĕнпур юлашкийĕсене пĕтерсе тăнасси, нацистсен власне тымарĕпех тăпăлтарса пăрахасси тата гитлерла государствăна парăнтарасси пулса тăрать. Çав ĕçе тума çитĕнĕлĕ вăйсем пур, эпир пĕр-пĕрне чĕререн парăнса тăрса тата туслă пулса, хамăран задачăпа хамăран тивĕçлĕхе пурнăçа кĕртме пĕр иккĕленмесĕр хатĕр тăрса тĕл пултăмăр. Тăшман çине—малалла!»

Президент Г. Трумэн радио тăрăх чĕнсе калани

«Англипе Америкăн Эйзенхауэр генерал командир пулса ертсе пыракан çарĕсем совет çарĕсемпе хăйсем тĕл пулма палăртса хунă вырăнта—нацистла Германи чĕринче тĕл пулчĕç. Тăшманăн вăйĕсене икĕ пая касса уйăрнă. Çăнă вăл Европăра татăлă çĕнтерӳ тунă сехет мар-ха, анчах çав сехет,—ун патне çитес тесе пĕтĕм Америка халăхĕ, мĕнпур Британи халăхĕсем тата пĕтĕм совет халăхĕ нумай вăхăт хушши ĕçленĕ тата кĕл тунă,—çав сехет сывхарса киляет. Пирĕн хĕçпăшалсем Германи чĕринче пĕрлешни пĕтĕм тĕнчешĕн пысăк выраăн йышăнса тăрать, ăна тĕнче паллă тумасăр хăварме. Çакă вăл, пĕрре мĕшĕнчен, Гитлерпа унăн вăрă-хурахла правительствин юлашки вăйăр та ăссăр шанчăкне пĕтерсе тăкнине пĕлтерет. Тиранипе этемле мар тискерлĕхе хирĕç пыракан çак вăрçăра союзниксем пулса тăнă державăсен пĕрлĕхлĕ ĕçне тата пĕрлĕхлĕ фронта вĕсем ĕçре кăтартса пачĕç, çавнах вĕсем унччен нумай малтан хăйсем çирĕп те хатĕр тăнипе кăтартса панă. Пирĕн кĕрешӳре пиçĕхнĕ çарсем çав задачăсене союзниксем Германире татăклă триумф тумалăх çĕнтерӳллĕн татса пама пĕрлĕхлĕн ĕмĕтленнине нимĕн те хавшатма пултараймасть. Иккĕмĕшĕнчен, пирĕн вăйсем çак самантра пĕрлешни пире хамăра тата пĕтĕм тĕнчене çакна кăтартса парать: мирпе ирĕклĕх ĕçĕнче пирĕн халăхсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлени усăллă та ăнăçлă килĕштерӳ пулса тăрать, çакă вăл мĕнпур вăрçăсен историйĕнчи чи аслă кампанин чи пысăк йывăрлăхĕсене ăнăçлăн çĕнтерме май парать. Пĕр-пĕринчен инçетре пурăннă пирки, чĕлхесен уйрăмлăхĕ пирки тата сыхăну ĕçĕнчи йывăрлăхсем пирки пулнă чăрмавсене çĕнтерсе, пĕрле плансем тума тата алла-аллăн тăрса пĕрле çапăçма пултаракан халăхсем мирлĕ вăхăт валли мир организацине пĕрлĕхлĕ ĕçре те пĕрле пурăнма тата пĕрле ĕçлеме пултарĕç.

Юлашкинчен, союзлă хĕçпăшалăн тата союзлă стратегин çак аслă та чаплă улăх—Франпин Рузвельтăн паттăрлăхĕпе çирĕплĕхне çав тери пысăк парне кӳни пулать, çакна ăна сăмахпа каласа палăртма çук, çакна ăна союзлă нацисен çăпăçури салтакĕсемпе моряксем çирĕп те паттăр пулнипе ăна пурнăçа кĕртме май пулчĕ. Анчах хамăр тăшмансене Европăра тата Лăпкă океан çинче пуçĕпех çапса арканттичен хамăран геройла салтаксемпе моряксене пулăшса тăрас тесен, тылра ĕçе вăйсăлратнă пулмалла мар, мĕншĕн тесен, çапăçу фронтĕсенче сывлăш çавăрмалăн самант пулас çуккине эпир пурте пĕлетпĕр».

Осоавиахимăн Шупашкар хулинчи организацийĕн конференцийĕ

Çак кунсенче Шупашкар хулинчи осоавиахим организацийĕн конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференци Осоавиахим Шупашкар хула совечĕн ĕçĕсем çинчен М. Корсков юлташăн докладне итлесе сӳтсе-явăрĕ.

Отчетлă тапхăрта Осоавиахим организацисен ретне 8.296 çын хутшăннă. Осоавиахим членĕсене вăрçă ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе нумай ĕçсем тунă. Организацисенче вăрçă ĕçне вĕренме ятарласа кружоксем, взводсем организацинленĕ.

Осоавиахим организацисен ĕçĕнче çитменлĕхсем те сахал мар.

Пленире 11 çын тухса каласрĕç. Вĕсем Осоавиахим хула совечĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса пачĕç.

Конференци Осоавиахим организацисен задачисене палăртса решени йышăнса хăварчĕ. Осоавиахимăн хула советне 29 сынран тата 9 сынран президиум суйларĕ.

Осоавиахим хула совечĕн çĕнĕ составĕ организацийĕ ларăвĕнче Осоавиахим хула совечĕн председателĕ пулса ĕçлеме М. А. Корсков юлташа суйласа хăварнă.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН

ПРИКАЗĔ

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне ЖУКОВА
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-полковника МАЛИНИНА

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, паян, апрелĕн 27-мĕшĕнче, РАТЕНОВ, ШПАНДАУ, ПОТСДАМ хулисене—çулсен паха узлĕсене тата Германин вăтаçĕрти пайĕнчи оборонин питĕ вăйлă тĕреклетнĕ пунктĕсене—туртса илнĕ.

Асăннă хуласене туртса илесшĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: ПЕРХОРОВИЧ генерал-лейтенантăн, ЛУКЬЯНЧЕНКО генерал-лейтенантăн, ПОЗНЯК генерал-лейтенантăн, АНДРЕЕВ генерал-лейтенантăн, АНАШКИН генерал-майорăн, ВЫДРИГАН генерал-майорăн, ЗАИКИН генерал-майорăн, ПОЛЯКОВ генерал-майорăн, ПАВЛОВСКИЙ полковникăн, МУЗЫКИН полковникăн, ИВАНОВ полковникăн, ГЕРВАСИЕВ полковникăн, СОЛОВЬЕВ полковникăн çарĕсем; КОНСТАНТИНОВ генерал-лейтенантăн, ШИТОВ генерал-майорăн, КОБЛОВ генерал-майорăн, РЫШКОВ полковникăн кавалерисчĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн ГОДИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ИЗУМРУДОВăН, артиллери генерал-майорĕн ПЫЛИНĂН, МАКСИМОВ полковникăн, ЖИГАРЕВ полковникăн, ЕЛОВАТСКИЙ полковникăн, ИВАНОВ полковникăн, ВАШЕНОВ полковникăн, ЮРИН полковникăн, МИХАЙЛОВ полковникăн, ШУБИН полковникăн, БОНДАРЕНКО подполковникăн, ВАТИШЕВ подполковникăн, ПУЗИК подполковникăн, АЛЫМОВ подполковникăн, ПОГОДСКИЙ подполковникăн, ЯЦЕНКО подполковникăн, БИРЮКОВ подполковникăн, ДОБРЕНСКИЙ майорăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн КРЕТОВăН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ВЕДЕНЕЕВăН, ПОТАПОВ полковникăн, ФЕДОРОВ полковникăн, МОХРЯКОВ полковникăн, БАБЕНКО подполковникăн, ШАРГОРОДСКИЙ подполковникăн, ГАРАЩЕНКО подполковникăн, КОРОСТИЙ подполковникăн, ШАМИН подполковникăн, БЕЛОБОРОДОВ подполковникăн танкистсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн САБИЦКИН, авиаци генерал-майорĕн КОМАРОВăН, авиаци генерал-майорĕн ДЗУСОВăН летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн КОМАРОВăН, НАЗАРЕНКО полковникăн, КИСЕЛЕВ полковникăн, МАСИК полковникăн, ТАЛЬЯНЕЦ подполковникăн, ТРОЦКИЙ подполковникăн, ЧИСТЯКОВ майорăн, ЗАМЧАЛОВ майорăн, ПЕТРУХИН капитанăн саперĕсем; СОЛОВЬЕВ полковникăн, КОГАН подполковникăн, МАСЛОВ подполковникăн, УЛЬЯНЕНКОВ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, РАТЕНОВ, ШПАНДАУ, ПОТСДАМ хулисене туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, апрелĕн 27-мĕшĕнче, 21 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, иккĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс перса, Белоруссири 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, асăннă хуласене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, асăннă хуласене туртса илессишĕн çапăçнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи апрелĕн 27-мĕшĕ. № 347.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН

ПРИКАЗĔ

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне РОКОССОВСКИЕ
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-полковника БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, паян, апрелĕн 27-мĕшĕнче, ПРЕНЦЛАУ, АНГЕРМЮНДЕ хулисене—нимĕçсен хĕвеланăç Померанири оборонин тĕреклĕ паха пунктĕсене туртса илнĕ.

ПРЕНЦЛАУ, АНГЕРМЮНДЕ хулисене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: ПОПОВ генерал-полковникăн, ГРИШИН генерал-полковникăн, ТЕТЕШКИН генерал-майорăн, КИНОСЯН генерал-лейтенантăн, ПАРХОМЕНКО генерал-лейтенантăн, ДРАТВИН генерл-лейтенантăн, ЧАНЫШЕВ генерал-лейтенантăн, РЯБЫШЕВ генерал-лейтенантăн, СМИРНОВ генерал-лейтенантăн, ТЕРЕНТЬЕВ генерал-лейтенантăн, ШЕПЕЛЬ полковникăн, ЧЕТВЕРТУХИН полковникăн, ЕМЕЛЬЯНЕНКО полковникăн, ГУСЕВ генерал-майорăн, ОГИЕНКО полковникăн, БЕЛЯЕВ полковникăн, КИРСАНОВ генерал-майорăн, ТРУДОЛЮБОВ полковникăн, КАРПЕЛЮК полковникăн, КАЛАДЗЕ полковникăн, СОЛОВЬЕВ генерал-майорăн, ГОЛУБЕВ полковникăн, МУРАТОВ полковникăн, ТИМОФЕЕВ генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн БЕСКИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ПЯДУСОВăН, артиллери генерал-майорĕн РОГОЗИНăН, ЗАХАРОВ полковникăн, ТЮРИН полковникăн, БАРМОТИН полковникăн, БЕЛЯКОВ полковникăн, СЫРОВАТКИН полковникăн, ВОЙЦЕХОВСКИЙ подполковникăн, САЛИТАН полковникăн, РЫБКИН полковникăн, КРАВЧЕНКО полковникăн, МАЛИКИН подполковникăн, ЧЕРНЫШЕВ майорăн, КОПЫЛОВ майорăн артиллерисчĕсем; танковой çарсен генерал-лейтенанчĕн ПАНФИЛОВăН, ЕГОРОВ подполковникăн, УРВАНОВ полковникăн, КУЦ подполковникăн, ДЬЯЧУК подполковникăн, НЕМКОВИЧ подполковникăн, ДЕНИН подполковникăн, ХАРИТОНОВ полковникăн, ИГНАТОВ подполковникăн, РАЗУВАЛОВ подполковникăн, СИТКОВ подполковникăн, ПОВАРОВ подполковникăн, СЛОБОДЯН подполковникăн, ШЕВЧЕНКО подполковникăн танкистсем çĕсем; авиаци генерал-полковникĕн ВЕРШИНИНăН, авиаци генерал-майорĕн АЛЕКСЕЕВăН, СМОЛОВИК полковникăн, ВУСС полковникăн, КАЛУГИН полковникăн, ГРИШЕНКО полковникăн, ДОДОНОВ полковникăн, ТИХОМИРОВ полковникăн, ВОЛКОВ полковникăн, БЕРШАНСКАЯ подполковникăн, ЛОПУХОВСКИЙ майорăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн БЛАГОСЛАВОВăН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ВИТВИНИНăН, ТРЕТЬЯКОВ полковникăн, ДОБЫЧИН полковникăн, МИРОТВОРСКИЙ полковникăн, ВИЗИРОВ полковникăн, ЩУКИН подполковникăн, ОРДАНОВСКИЙ подполковникăн, БАЛАНДИН полковникăн саперĕсем; сыхăну çарĕсен генерал-майорĕн НОВАРЧУКАН, ПРОЦЕРОВ подполковникăн, ЛЕБЕДЕВ подполковникăн связисчĕсем.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ПРЕНЦЛАУ, АНГЕРМЮНДЕ хулисене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, апрелĕн 27-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, Белоруссири 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, çĕлерех асăннă хуласене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, çĕлерех асăннă хуласене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи апрелĕн 27-мĕшĕ. № 348.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН

ПРИКАЗĔ

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА
Фронт штабĕн начальникне
Арми генералне ПЕТРОВА

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем паян, апрелĕн 27-мĕшĕнче, ВИТТЕНБЕРГ хулине—нимĕçсен ЭЛЬБА шывĕ çинчи оборонин тĕреклетнĕ паха пунктне çапăçса турта илнĕ.

ВИТТЕНБЕРГ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: ПУХОВ генерал-полковникăн, МАЛАНДИН генерал-лейтенантăн, ЧЕРОКМАНОВ генерал-лейтенантăн, ПУЗИКОВ генерал-лейтенантăн, ЧЕРВОНИЙ генерал-майорăн; ИВАНОВ полковникăн, КРАСНОВ генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн КУБЕЕВăН, артиллери генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЬКОВăН, артиллери генерал-майорĕн ВОЛКЕНШТЕЙНăН, ЦЕСАРЬ подполковникăн, КАЛИНИН подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн КОРОЛЕВăН, танковăй çарсен генерал-майорĕн ЕРМАКОВăН, НОСКОВ полковникăн, БОРИСЕНКО полковникăн, БУСЛАЕВ полковникăн, РЯЗАНЦЕВ полковникăн, НАЗАРОВ майорăн танкистсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн РЯЗАНОВăН, авиаци генерал-лейтенанчĕн УТИНăН, ПОКРЫШКИН полковникăн, авиаци генерал-майорĕн МАЧИНăН летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн ВАРВАРКИНăН саперĕсем; сыхăну çарĕсен генерал-майорĕн АХРЕМЕНКăН, Государство Хăрушсăрлăх подполковникĕн ГРИБăН связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ВИТТЕНБЕРГ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, апрелĕн 27-мĕшĕнче, 23 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, Украинăри 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ВИТТЕНБЕРГ хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ВИТТЕНБЕРГ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи апрелĕн 27-мĕшĕ. № 349.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 26-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Апрелĕн 26-мĕшĕнче БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем ПИЛЛАУ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Балтика тинĕсĕпе ФРИШ-ГАФ заливне пĕрлештерекен канал урлă каçнă та ФРИШ-НЕРУНГ сăмах сахăнче малалла наступлени туса пынă.

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем ШТЕТТИН хулинчен кăнтăртарахра Хĕвелтухăç ОДЕРПА Хĕвеланăç ОДЕР шывĕсем урлă каçнă та, нимĕçсен ОДЕР шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татса, 30 километр малалла кайнă. Çапăçса пырса, фронт çарĕсем Померанин тĕп хулине тата пысăк тинĕс портне ШТЕТТИНА туртса илнĕ, çавăн пекех тата ГАРТЦ, ПЕНКУН, КАЗЕНОВ, ШВЕДТ хулисене, ШТЕВЕН, ШВЕННЕН, ГЛАЗОВ, БАГЕМЮЛЬ, ФРИДЕФЕЛЬД, ГРЮНЦ, ВАРТИН, ГРЮНБЕРГ, ШТЕНДЕЛЬ, ФИРРАДЕН ятлă пысăк ялсене йышăннă, вара РАНДОВ каналĕ урлă каçса кайнă.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем тăшманпа БЕРЛИН урамĕсенче хытă çапăçнă, хулан ГАРТЕНШТАДТ, ШТИМЕНШТАДТ районĕсене туртса илнĕ тата хулан хĕвелтухăç пайĕнче Герлиц вокзалне йышăннă. БЕРЛИНРАН çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре фронт çарĕсем ФИНОВ, ФИНОВФУРТ, МАРИЕНВЕРДЕР ятлă пысăк ялсене туртса илнĕ. ОДЕР çинчи ФРАНКФУРТ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре фронт çарĕсем КЕНИГС-ВУСТЕРХАУЗЕН, НОЙЕ-МЮЛЕ, ШТОРКОВ, БЕЛЕЦКОЙ, ЛИБЕРОЗЕ хулисене тата ЗЕНЦИГ, ГУССОВ, ГРОСС-ШАУЗН, ДАМСДОРФ, ХЕРЦБЕРГ, ГЕРСДОРФ, ШТРЕМЕН, ТРЕБАЧ, МИТВЕЙДЕ, ГРОСС-ЛЕЙПЕН, МОХОВ ятлă пысăк ялсене çапăçса турта илнĕ. Апрелĕн 25-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне тытăнса илнĕ тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем—70, танксемпе хăй тĕллĕн çӳренĕн тупăсем—30, хир тупписем — 248, автомашинăсем—1.467, паровозсем—53, чугун çул вагонĕсем—3.404.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем БЕРЛИНăн хĕвеланăç пайĕнчи урамĕсенче çапăçнă, хулан ДАЛЕМ районне туртса илнĕ. ЭЛЬБА шывĕн хĕвеланăç хĕрринче фронт çарĕсем ТОРГАУ хулипе СТРЕЛА хулине туртса илнĕ. БАУЦЕН хули районĕнче фронт çарĕсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйăсен контратакисене сире-сире янă. Апрелĕн 25-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем 1.500 нимĕç салтакĕпе офицерне тытăнса илнĕ, 238 танкпа хăй тĕллĕн çӳренкен тупă тата 236 хир туппи тытса илнĕ.

БРЕСЛАУРА пирĕн çарсем хулан хĕвеланăç пайĕнчи урамĕсенче çапăçнă, 26 квартал, заводсем вырнаçса ларнă темиçе района тата арсенала çуррине ытла туртса илнĕ, 110 тупă тытса илнĕ.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем малалла наступлени туса пынă, апрелĕн 26-мĕшĕнче, аякран çавăрса илмелли пулăсем тарулă маневр туса тата фронтран атакăласа, Чехословакин промышленноçлă пысăк центрĕ пулса тăракан БРНО (БРЮН) хулине—çулсен паха узлĕне тата нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пунктне—туртса илнĕ, çавăн пекех тата Чехословакин çĕрĕнче халăх пурăнакан 30 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ВЕЛЕШОВИЦЕ, ЕЗЕРАЦ, МОКРА, МАЛОМЕРЖИЦЕ, ОБРЖАНЫ, КОГОУТОВИЦЕ, ЖЕДЕТИН ятлă пысăк ялсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă тата разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Апрелĕн 25-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 125 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳренкен туппине çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăш флочĕ çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 82 самолетне персе ӳкернĕ.

Çураки ĕçĕсем пуçланчĕç

ÇĔРПӲ, апрелĕн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри нумай колхозсенче çураки ĕçĕсем пуçланчĕç. Паянхи кун тĕлне 250 гектар ытла клевер акнă, 270 гектар çинчи кĕрхи тырă калчисене апатлантарнă.

Чылай колхозсем çĕрулми яровизацилеме тытăнчĕç. «Пионер» колхоз 300 центнер, «Емĕт» колхоз 60 центнер çĕрулми яровизацилеме хывнă. Кок-сагыз акакан пур колхозсем те унăн вăрлăхне стратификацилеме хывнă.

Рындино ял Советне кĕрекен «Новая жизнь» колхоз ĕнер 25 плугпа çурхи тырă акмалли çĕре сухалама тухнă. «Пионер» колхоз та паян сухалама тухрĕ. Кунта кĕрхи çĕртме тунă лаптăксене сӳлласа илсе сӳрелеççĕ.

Анчах та «Чăваш. ЦИК», «Авангард» колхозсем клевер акма та тухман, клевер вăрлăхне те çитĕлĕклĕ хатĕрлемен.

А. ИВАНОВ.

Чугун çул транспортне вутă хатĕрлесе парас тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçлечĕшĕн Чăваш республикине Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне панă тата

Чугун çул транспортне вутă хатĕрлесе парассишĕн облаçсемпе республикăсем хушшинче пыракан социализмлă ăмăртура 1945 çулхи март уйăхĕнче лайăх ĕçленĕшĕн Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ, Çулĕр Халăх Комиссариачĕ тата Главнаблес çирĕн Чăваш республикине Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пама тата 250 пин тенкĕ укçа парса премилеме йышăннă.

ССР Союзĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн XI-мĕш сессийĕ

Национальноҫсен Совечĕпе Союз Совечĕн 1945 çулхи апрелĕн 26-мĕшĕнче пулса итнĕ ларăвĕсем çинчен

ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРЎ

Ĕнер, апрелĕн 26-мĕшĕнче, кăнтăрла 11 сехетре, СССР Верховный Совечĕн лару залĕнче Кремльте Национальноҫсен Совечĕн иккĕмĕш ларăвĕ пулса иртнĕ.

Председатель пулса ертсе пыраканĕ — Национальноҫсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ М. В. Кулагин депутат.

Кун йĕркинче—ССР Союзĕн государство бюджечĕ çинчен тунă доклад тăрăх пымалли прениҫем. Прениҫенче сăмсем тухса каланă: депутат Т. А. Константинов (Молдави ССР-ĕ), депутат П. С. Прокконен (Карел-Финн ССР-ĕ), депутат Г. Чуланов (Казах ССР-ĕ), депутат В. Я. Совых (Белорусси ССР-ĕ), депутат Л. Г. Осипян (Армени ССР-ĕ), депутат Р. К. Ибрагимов (Пушкăрт АССР-ĕ), депутат А. И. Венцлова (Литва ССР-ĕ), депутат К. Джаналиев (Киргиз ССР-ĕ), СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Аслă шкул комитечĕн председателĕ С. Ф. Кафтанов, депутат К. Д. Кулов (Сурçĕр-Осетин АССР-ĕ).

6 сехетре кăсхине Союз Совечĕн иккĕмĕш ларăвĕ пулнă.

Председатель пулса ертсе пыраканĕ — Союз Совечĕн Председателĕн Заместителĕ У. Юсупов депутат.

Кун йĕркинче — ССР Союзĕн государство бюджечĕ çинчен тунă доклад тăрăх пымалли прениҫем. Прениҫенче сăмсем тухса каланă: депутат Я. Э. Калнберзин (Латви ССР-ĕ), депутат Н. Курбанов (Таджик ССР-ĕ), депутат И. В. Васильев (Воронеж облаҫĕ), депутат Н. И. Мусхелишвили (Грузи ССР-ĕ), депутат С. М. Шарофеев (Тутар АССР-ĕ), СССР Ашкакайпа сĕтçу промышленноҫĕн Халăх Комиссарĕ П. В. Смирнов, депутат Ф. Р. Васильев (Смоленск облаҫĕ), депутат К. В. Шуршина (Брянск облаҫĕ), депутат П. С. Тарасов (Мускав облаҫĕ), СССР Хура металлурги промышленность Халăх Комиссарĕн Заместителĕ депутат И. П. Бардин.

ССР Союзĕн 1945 çулхи бюджечĕ тата ССР Союзĕн 1943 çулхи государство бюджетне пурнăçлани çинчен

ССР Союзĕн Финанс Халăх Комиссарĕ А. Г. Зверев юлташ Союз Совечĕпе Национальноҫсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕнче 1945 çулхи апрелĕн 24-мĕшĕнче тунă доклад)*

Накопленипе планне пурнăçа кĕртмешкĕн производство организацийĕн техникипе тата ытларах лайăхлатмалла, малта пыракан предприятисен опытне анлăн сармалла. Накопленипе планне пурнăçа кĕртмешкĕн материалсене, топливăна, электроэнергие тата ĕçуҫри фончĕсене перекетлĕн расходламалла, юрăхсăр продукцие, каялшсен тата производствăна кайман расходсен хисепне чакармалла.

Сталин юлташ пире çапла вĕрентет: халăх хуҫалăхĕнче ытларах накопленипе тумашкăн хуҫасăрлăха пĕтермелле, промышленноҫăн шалти ресурсĕсене мобилизацилемелле, пирĕн мĕнпур предприятисенче хуҫалăх расходне çирĕплетмелле, продукцин хăйне ларакан хакне тăтăшах чакарса пымалла, промышленноҫăн мĕнпур отраслĕсенче ытларах накопленипе тумалла.

ХАЛĂХРАН ТУХАКАН УКҪА

1945 çулхи государство бюджечĕн дохочĕсенче, вăрçă вăхăтĕнчи иртнĕ çулсенчи пекех, халăхран налогсемпе заемсем тăрăх пухăнакан укҫа чылай пысăк вырăн йышăнса тăрать. Халăх хуҫалăхĕнче ĕçлекен çынсен хисепĕ ҫĕнĕ май 1945 çулхи бюджета государство налогĕсем тăрăх кĕрекен укҫан суммине 45,3 миллиард тенкĕ чухлĕ, урăхла каласан—1944 çулхинчен 8,1 миллиард тенкĕ ытларах палăртса хунă. Ялхуҫалăх налогĕпе подоходлăх налог укҫи те бюджета чылай ытларах кĕмелле.

Совет Союзĕн халăх хушшинче саракан государство заемĕсем халăх хуҫалăхĕшĕн мĕн тери паха пулнине тата вĕсене халăх хаваҫăн çырăнса илнине пурте пĕлеҫҫĕ.

1945 çулта государствăн тăваттăмĕш военлă займне 25 миллиард тенкĕлĕх кăларма палăртнă. Пĕтĕм совет халăхĕ çак ҫĕнĕ займа тулли кăмăлпа çырăнса илесси пирки нимĕн те иккĕленмелли çук.

Тата çакна палăртмалла: 1945 çулта перекет кассисенче 1946 çула куçакан вкладсен суммине 1 миллиард та 400 миллион тенкĕ чухлĕ ӳстерме палăртнă. 1944 çулта çав сумма 856 миллион тенкĕ чухлĕ пулнă.

Малта кăтартнă пек, 1945 çулхи государство бюджечĕн суммипе 300 миллиард тенкĕрен иртет. Çав питĕ пысăк финанс программине ăнăçлăн пурнăçа кĕртмешкĕн финанс аппаратăчĕн мĕнпур звенопе ĕçне тата ытларах лайăхлатмалла. Партипе правительство ертсе пынипе финанс органĕсем хăйсене панă ответлă заданисене ăнăçлăн пурнăçласси пирки иккĕленмелли çук.

ВĂРÇА РАСХОЧĔСЕМ ВАЛЛИ УКҪА-ТЕНКĔ УЙĂРСА ПАРАССИ

Депутат юлташсем! Гитлерла Германине пĕтĕмĕшпех арканса тăкасси сывăх ĕнтĕ. Анчах тăшман, хăй пĕтсе ларассине туйса, хаярăн хирĕç тăрать. Вăл хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкас тесен, ăна çĕнтерес тесен, пирĕн тата вăйлăрах ĕçлемелле, пирĕн государствăн мĕнпур пурнăçĕпе укҫа ресурсĕсене ытларах мобилизацилемелле.

Сире çирĕплетме тăратнă государство бюджетĕнче Оборона Халăх Комиссариатĕне Тинĕс-Çар флочĕн Халăх Комиссариатне 137,9 миллиард тенкĕ пама палăртса хунă, çакă вăл 1945 çулхи бюджетăн мĕнпур расхочĕсен 45,1 процентĕ чухлĕ пулать.

ХАЛĂХ ХУҪАЛĂХĔ ВАЛЛИ УКҪА-ТЕНКĔ УЙĂРСА ПАРАССИ

Государство бюджетĕнче халăх хуҫалăхĕ валли 64,6 миллиард тенкĕ пама пăхнă, 1944 çулта çав расходсем 49,0 миллиард тенкĕ пулнă, урăхла каласан, 31,8 процент чухлĕ ӳснĕ. Халăх хуҫалăхĕ валли укҫа-тенкĕ уйăрса парасси çавăн пек ӳсни—ССР Союзĕн 1945 çулхи государство бюджечĕн палăртнă енĕсенчен пĕри пулса тăрать. Халăх хуҫалăхĕн уйăрăм отраслĕсем тăрăх асăннă суммăна çакăн пек валеҫме палăртнă: (миллиард тенкĕпе шутласа)

	1944 çулхи бюджета пурнăçа кĕртни	1945 çул	1944 çулпа танлаштарсан ӳснĕ (процентпа)
Пĕтĕм халăх хуҫалăхĕ	49,0	64,6	31,8
Вăл шутра:			
Промышленность	27,3	35,9	31,5
Ялхуҫалăхĕ	7,0	9,2	31,4
Транспортпа çыхăну	7,7	9,8	27,3
Суту-илӳпе хатĕрлев ĕçĕ	1,2	1,7	41,7
Коммуналлă тата пурăнмалли çуртпĕр хуҫалăхĕ	1,8	2,9	61,1

1945 çулта халăх хуҫалăхĕнче тухакан расходсем ӳсни капитальнăй строительство валли тата, пуринчен малтан, ирĕке кăларнă районсенчи хуҫалăха юсаса ура çине тăратас ĕçсем валли тухакан расходсем ӳсничен килет.

1945 çулта палăртнă капитальнăй строительство ĕçĕсен программине пурнăçа кĕртесси пирĕн хуҫалăх организацийĕсене строительство ĕçĕсене йӳнетес ыйтусем çине тимлерех çаврăнса пăхма хушать.

1945 çулта хуҫалăх организацийĕсем хăйсен оборотри укҫи-тенкисене ӳстерни кирлĕ. Халăх хуҫалăхĕн мĕнпур отраслĕсенчи предприятисем хăйсен оборотри укҫи-тенки 1945 çулта 66,0 миллиард тенкĕ чухлĕ пулмалла. 1944 çулта вăл 59,2 миллиард тенкĕ пулнă. Çав укҫа-тенкĕ çапла вара 6,8 миллиард тенкĕ чухлĕ, вăл хисеплен государство бюджечĕн шучĕпе—3,2 миллиард тенкĕ чухлĕ ӳсет.

СОЦИАЛЛĂ-КУЛЬТУРАЛЛĂ ĔÇСЕМ ВАЛЛИ УКҪА-ТЕНКĔ УЙĂРСА ПАРАССИ

ССР Союзĕн 1945 çулхи государство бюджетĕнче социалла-культурăллă ĕçсем валли тухакан расходсене те ӳстерме палăртнă. Çав расходсем 1944 çулта 31,5 миллиард тенкĕ пулнă пулсан, 1945 çулта вĕсем 66,1 миллиард тенкĕпе сити ӳсеççĕ. урăхла каласан, 15,0 миллиард тенкĕ чухлĕ ӳсет. Уйăрăм ĕçсем тăрăх çăмăн чухлĕ укҫа-тенкĕ уйăрса пама палăртнă: (миллиард тенкĕпе шутласа).

	1944 çулхи бюджета пурнăçа кĕртни	1945 çул	1944 çулпа танлаштарсан ӳснĕ (процентпа)
Халăха çутта кăларас ĕç валли	20.440	28.591	39,9
Халăха сыхлас ĕçпе физкультура ĕçĕ	10.210	13.194	29,2
Государствăн социальнăй страхованийĕ	3.856	5.202	34,9
Нумай ачалă амăшĕсене тата тăлăх арăмсене государство пачакан пособисем	872	1.407	61,3
Социальнăй пулăшу	15.686	17.695	12,8

УПРАВЛЕНИ РАСХОЧĔСЕМ

Государство управленийĕн органĕсене тытса тăма 1945 çулта 9,5 миллиард тенкĕ, вăл шутран союзлă бюджет тăрăх—3,1 миллиард тенкĕ тата союзлă республикăсен государство бюджечĕсем тăрăх—6,4 миллиард тенкĕ уйăрса пама палăртнă. 1944 çулхипе танлаштарсан, государство управленийĕн аппаратне тытса тăнă çĕре тухакан расходсем 2,2 миллиард тенкĕ чухлĕ ӳсеççĕ, çакă вăл, пуринчен ытларах, нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи управлени органĕсене тытса тăнă çĕре тухакан расходсен шучĕпе ӳсет.

Вăрçă çулĕсенче управлени аппаратне пĕчĕклетнĕ тата ăна тытса тăма тухакан расходсене палăрмаллах чакарнă. Управлени аппаратне пĕчĕклетнине пула, пирĕн промышленноҫпа транспорт тата хуҫалăхăн ытти отраслĕсем çĕнĕрен ĕç вăйĕ чылай илчĕç.

Анчах хăшпĕр çĕрте управлени аппаратне тытса тăма ытлашши укҫа-тенкĕ сахал мар тăкаласҫĕ-ха. Предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем аппарат ĕçне лайăхлатас тĕллĕпе тимлĕрех ĕçлени тата управлени расхочĕсене пур енĕпе те чакарса пыни кирлĕ.

РЕСПУБЛИКĂСЕНЧИ ТАТА ВЫРАНТИ БЮДЖЕТСЕМ

Депутат юлташсем! ССР Союзĕн 1945 çулхи государство бюджетне вăрçă пуҫланăранпа малтанхи хут мĕнпур союзлă республикăсен бюджечĕсене пĕтĕм территорисем тăрăх кĕртнĕ. Çакă вăл пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар тунă аслă çĕнтерӳсен результачĕ пулса тăрать. (Алă çупаҫҫĕ).

Союзлă республикăсен государство бюджечĕсен хисепне 1945 çул валли 52,2 миллиард чухлĕ пулмалла туса палăртнă. 1944 çулхипе танлаштарсан, çакă вăл 14,5 миллиард тенкĕ е 38,6 процент чухлĕ ӳсет. Союзлă республикăсен государство бюджечĕсен пысăкĕшĕ çакăн пек ӳсни пуринчен малтан нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă союзлă республикăсенчи расходсем ӳсниничен килет. Çав республикăсен—Украинăпа, Белоруссипе, Молдаванпа, Литвăпа, Латвипе, Эстонипа тата Карел-Финн республикисен бюджечĕсем пĕтĕмĕшпе 112,3 процент чухлĕ ӳсеççĕ. Ытти союзлă республикăсен бюджечĕсем 22,3 процент чухлĕ ӳсеççĕ.

Уйăрăм союзлă республикăсен 1945 çулхи государство бюджечĕсем çакăн пек пулаççĕ: (миллион тенкĕпе шутласа),

	1944 çулхи бюджета пурнăçа кĕртни	1945 çул	1944 çулпа танлаштарсан ӳснĕ (процентпа)
РСФСР	23.556	28.588	21,4
Украинăпа ССР-ĕ	5.355	9.124	70,4
Белоруссипе ССР-ĕ	720	2.380	230
Азербайджанпа ССР-ĕ	971	1.183	21,8
Грузипе ССР-ĕ	1.223	1.456	19,6
Арми ССР-ĕ	572	650	13,6
Туркмен ССР-ĕ	417	516	23,7
Узбек ССР-ĕ	1.719	2.160	25,7
Таджик ССР-ĕ	498	651	30,7
Казах ССР-ĕ	1.437	1.885	31,2
Киргиз ССР-ĕ	407	562	38,1
Карел-Финн ССР-ĕ	153	288	88,3
Молдаван ССР-ĕ	170	540	217,7
Литва ССР-ĕ	169	728	330,8
Латви ССР-ĕ	156	792	408,7
Эстони ССР-ĕ	130	698	436,9
Пурĕ	37.653	52.198	38,6

Вăрçăн тăваттăмĕш çулĕнче союзлă республикăсен бюджечĕсем ӳсни Ленинла-Сталинла наци политики малалла çитĕнӳсем туни çинчен калать. Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче Совет Союзĕнчи халăхсен иксĕлми туслăхĕ татах та ытларах çирĕпленчĕ. Совет Союзĕнчи халăхсем тăванла килĕштерсе ĕçлени—пирĕн çĕршыв хăвачĕн паха çăлкуҫĕсенчен пĕри пулса тăрать.

1945 çулта союзлă республикăсен доходĕсем вырăнти хуҫалăх дохочĕсен шучĕпе ӳсеççĕ.

Вăхăтлăха оккупацинленĕ республикăсен тупăш никĕсне çирĕплетес тата вырăнти хуҫалăхпа нацилле культурăна юсаса ура çине тăратас тесе, союзлă бюджетран республикăсене 3.780 миллион тенкĕ хушса пама палăртнă.

Союзлă республикăсен расхочĕсенче халăх хуҫалăхĕ валли нумай укҫа-тенкĕ уйăрса пама палăртнă. Халăх хуҫалăхĕ валли укҫа-тенкĕ уйăрса пама палăртнă. 1944 çулта вăл 6,2 миллиард тенкĕ пулнă, урăхла каласан 48,4 процент ӳснĕ.

Халăх хуҫалăхĕ валли тухакан расходсем çавăн пек ӳсни нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă республикăсенче вырăнти промышленноҫа хула хуҫалăхĕпе çулйĕр хуҫалăхне хăвăртрах юсаса ура çине тăратас задачăсемпе килĕшсе тăрать. çавăн пекех тата ытти союзлă республикăсенче те вырăнти хула хуҫалăхне малалла аталантарма май парать.

1945 çулта капитальнăй ĕçсем валли 3,4 миллиард тенкĕ укҫа пама палăртнă. Çав укҫа-тенкĕрен çуррине яхăн нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă республикăсенче расходламалла пулать.

Республикăсенчи тата вырăнсенчи бюджетсене тĕреклетме государство заемĕсемпе вăрçă налогĕ тăрăх пухнă укҫа-тенкĕрен республикăсемпе вырăнти бюджетсене ытларах укҫа-тенкĕ уйăрса пама палăртнă. Государство заемĕсем тăрăх пухнă укҫа-тенкĕрен РСФСР бюджетне уйăрса паракан укҫа-тенкĕ хисепĕ 15 процентран 25 процента çити ӳсет. Вăрçа налогĕ тăрăх пухнă укҫа-тенкĕрен союзлă республикăсен бюджечĕсене (РСФСР-çăр пуҫне) уйăрса паракан укҫа-тенкĕ хисепĕ 5 процентран 15 процента çити ӳсет.

* * *

Депутат юлташсем! Виҫĕ держава руководителĕсен Крымри конференцийĕ йышăннă историллĕ решенисем пурнăçа кĕрсе пыраҫҫĕ. Ылханлă тăшмана пуҫĕнех çапса аркатас кун сывхарса килет.

ССР Союзĕн 1945 çулхи государство бюджечĕ, сире пăхса тухса çирĕплетме тăратнăскер, Отечественнăй аслă вăрçа сентерӳллĕн вĕçлеме, ирĕке кăларнă районсенчи хуҫалăха юсаса ура çине тăратма, хамăр çĕршывăн халăх хуҫалăхĕпе культурине малалла аталантарса тĕреклетме кирлĕ пулакан укҫа-тенке мобилизацилеме май парать.

Сĕнтерӳ сывăх ĕнтĕ. Пире сĕнтерӳ патне аслă Сталин ертсе пырать. (Нумайччен тăвăллăн алă çупаҫҫĕ, депутатсем пурте ура çине тăраҫҫĕ. Сталин юлташа хисеплесе овации тăвасҫĕ).

„Кĕтнĕ сехет çитрĕ“

ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЧИ ХАҪАТСЕМ СОВЕТ ÇАРĔСЕМ БЕРЛИНА КĔРСЕ КАЙНИ ÇИНЧЕН МĔН ÇЫРАҪҪĔ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС) Пур хаҫатсенче те Хĕрлĕ Çар Берлин хулине çапăçни çинчен нумай çыраҫҫĕ. Ĕнер кăсхине тата пăин ирхине радиопа паракан юлашки хыпарсем Хĕрлĕ Çар малалла куçса пынă çинчен пĕлтерипе пуҫланнă. «Нью-Йорк таймс» хаҫат çапла çырать: çунакан Берлин Гитлерпа унăн ĕçĕсем пирки истори мĕнле приговор йышăннине кĕтартса тăрать, тет.

ЛОНДОН, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Паян американецсен Англири радиопередатчикĕ хăйĕн обозревателĕ каланине пăнă. Унта çапла калана: Берлинăн чĕри арап-аран тапать. Берлин урамĕсенче вырăссен артиллерийĕн сасси кĕрлет. Совет çарĕсем, тăшмана аркатса пырса, пĕр чăранмасăр малалла куçса пыраҫҫĕ. Хĕрлĕ Çар Берлина Гитлер Мускава 1941 çулхи октябрь уйăхĕнче пырса çапма хăтланнă пек çапать. Унтанпа нумай вăхăт иртрĕ, вырăссем çав вăхăтпа усă курма пĕлчĕç. Нимĕҫсем халĕ тивĕçлипе тунрĕç. Берлин чĕри тапма чарăнчĕ. Анчах Хĕрлĕ Çар воннисен чĕрисем тата вăйлăрах тапаҫҫĕ, мĕншĕн тесен вĕсем Сталинград патĕнчен Берлина çитиччеленех тăшмана çĕнтерӳллĕн хăвалама пултарнине ăнланса илчĕç.

ПАРИЖ, апрелĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Франс пресс» агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Тунтикун, апрелĕн 23-мĕшĕнче, совет çарĕсем Берлин хулине вăркăнса кĕни çинчен» пĕлтерес шутпа Парижра ятарласа хаҫатсем кăларнă.

«Нувель лю матăн» хаҫат çапла çырать: «Эпир кĕтсе илтĕмĕрех! Вырăссем Берлинра! Нимĕҫсене татăклăн пырса çаннă. Вырăссен паттăр çарне виҫĕ хут урра!»

Кĕтнĕ сехет çитрĕ, çырать «Се Суар» хаҫат. Гитлер Европăра хăйĕн пирвайхи преступленине туна хыҫҫăн ирĕклĕхе юратакан халăхсем пĕтĕм чун-чĕререн вĕтнĕ наступлени сехечĕ çитрĕ. Гернике, Роттердам, Лондон, Ленинград хулисене аркатса енленĕ хыҫҫăн эпир кĕтсе тăнă наступлени сехечĕ çитрĕ.

«Фран-Тирер» хаҫатра Марсель Фурнье çапла çырать: «Вырăс халăхĕ, хăйĕн çулпуҫĕ Сталин пек, хăйĕн пĕтĕм вăйне вăрçă ĕçне, çĕнтерӳ ĕçне пачĕ, çак çĕнтерӳшĕн шухăшларĕ, пурăнчĕ, асапланчĕ, юн юхтарчĕ. Çакна никам та манмĕ, манма та пултараймасть. Германи çарĕсем вырăс территорине нумай кĕрсе кайнăччĕ, вĕсем Днепр урлă, Дон урлă, Буг урлă каҫса, Атăл хĕрринех çитнĕччĕ. Анчах ĕçсем тата малалла кайма пултарайманрĕç. Халĕ ĕнтĕ Сталинград патĕнче çĕнтернĕ Хĕрлĕ Çар çĕнтерӳллĕн Берлин хулине вăркăнса кĕчĕ».

Хĕвеланăҫ Европăра вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре калана тăрăх, союзниксен бронетанковăй чаҫĕсем çурçĕртен Мюнхен патнелле куçса пыраҫҫĕ. Вĕсем Реген хулинчен 24 километр кăнтăр-хĕвелтухăҫнерехре тата Австри чиккинчен 29 километрта тăраҫҫĕ.

Кунтан хĕвелтухăҫнерехре союзниксем Дунай шывĕ хĕрринче Сегенсбурган 3 километр хĕвеланăҫнерехри вырăнтан пуҫласа Кельгейм патне çитиччен 10 миля тăршшĕ участока хăйсен аллинче тытса тăраҫҫĕ.

Штутгартран кăнтăртарахри «михĕре» чылай хуласем тытса илнĕ. Вăл «михĕ», пĕтерсе пыраҫҫĕ.

Голландипе Германи хушшинчи чикĕре союзниксем тинĕс хĕррине тухнă. Çапла вара, Делфзейл районĕнче немĕҫсен группировкине уйăрса пăрахнă.

Апрелĕн 24-мĕшĕнче союзниксем 43.000 çынна ытла тытăкăна илнĕ.

АМЕРИКА ХАҪАЧĔСЕМ НИМĔҪСЕН ТИСКЕРЛĔХĔ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Америка хаҫачĕсем Германирен пĕлтернĕ хыпарсене пичетлесе кăларнă. Вăл хыпарсенче калана тăрăх, çар влаҫĕсем Беймар хулинче пурăнакан немĕҫсене Бухенвальдри паллă концентрацилле лагере кăтартса çӳренĕ. Немĕҫсене çапла калана: «Хăвăр мĕншĕн ответ тытмаллине сирĕн курмаллах», тенĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаҫатăн обозревателĕ Карривэн виселицăсем, асаплантармалли пӳлĕмсем, ӳт касмалли пӳлĕмсем, крематорисемпе лабораторисем мĕнле пулни çинчен çырса пĕлтерет. Карривэн пĕлтернĕ тăрăх, çынсем кĕнĕ-кĕменех этем тирне çусан кайман сăрпа сăрласа пĕтернĕ пысăк татăксенчен тунă тăрăха курма пултарнă. Çав тир татăкĕсене «татуировкăсем çинчен трактат сыракан Германи докторĕ» тата Бухенвальд лагерĕн начальникĕн арăмĕ пухнă пулнă. Çав тăрăхран икĕ пысăк абажур тунă.

Малалла икĕ барака пăхса тухнă. Вăл бараксенче 3.000 чирлĕ çын тата 4.800 ватă çын пулнă. Вĕсем пӳлĕмрен тухма та пултарайман. Халран кайнă тата анăранă ытти çынсем таврара утса çӳренĕ. Чирлисен пӳлĕмĕнче хупса хуннисенĕ нимĕнле пулăшу та паман, вĕсем койкăсем çинчех виле-виле кайнă.

Наука лабораторийĕнче çын органĕсене хунă нумай банкăсем пулнă. Тепĕр лабораторире тиф чирĕнчен сыхламалли сыворотка тума тиф ертмелли ятарласа тунă оборудовани пулнă.

Карривэн пĕлтернĕ тăрăх, нацистсем çапла калана: Бухенвальд çине бомбăсем пăрахнине пула, иртнĕ çулхи август уйăхĕнче Тельман вилнĕ, тенĕ. Анчах та çырса хунă хутсем кăтартнă тăрăх, Тельман Бухенвальдра нихăçан та пулман.

Ку лагерьте пуринчен ытла политикăллă ĕçсемшĕн хупнă çынсем пулнă пулин те, кунта тыткăна лекнĕ çыпăç çыннисем, Франци партизанĕсем тата Варшава хулинчи восстание хутшăннă çынсем те пулнă.

ГЕРИНГ СУХАЛНИ

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Паян каҫхине гитлерла радио Герман Геринг «чĕре ыратнине пула» Германин сывлăш-çар вăйĕсен командующийĕ вырăнĕнчен тухни çинчен пĕлтернĕ. «Геринг ыйтнине кăмăл туса», Гитлер ун вырăнне Риттер фон Грейм генерала лартнă.

Геринг ятне нумай вăхăт хушшинче асăнмасăр тăнă хыҫҫăн гитлерла радио ăна паянхи передачăра пирвайхи хут асăннă. Геринг вырăнтан тухнă тесе пĕлтерни вăл пĕр-пĕр нейтральнăй çĕршыва тарнине е пытанса ĕçлеме куçнине пытарма хăтланни пулать пуль, тесе шутлаҫҫĕ.

ПЕТЭН ФРАНЦИЕ ТАВĂРĂНАС ПИРКИ

ПАРИЖ, апрелĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Лайăх пĕлсе тăракан çынсем каллех тарăх, Петэн Франципе тавăрăнасси çинчен Франципе Швейцари влаҫĕсем хушшинче калаçусем темиçе кун малтанах пуçланнă. Иртнĕ эрне вĕçĕнче Петэн шухăшĕ çинчен Швейцари влаҫĕсем Франци правительствин пуçлăхне пĕлтернĕ пулнă. Çак ыйтăва министрсен совечĕн ĕнерхи ларăвĕнче сӳтсе-явнă та Петэна Франципе тавăрăнма ирĕк памалла тунă. Петэнăн малашнехи кунçулĕ пирки ĕнерхи ларура министрсен пĕр пайĕ Петэна тĕрмене хупассине хирĕç калана, ăна Париж районĕнче сыхласа усрамалла, тенĕ. Петэна Парижра апрелĕн 27-мĕшĕнче кĕтеççĕ. Петэн майлă шухăшлакан хаҫатсем каялла тавăрăнаканни Петэна тарă шыв çине кăларма хăтланаççĕ. Çав вăхăтрах хирĕç тăрса кĕрешекен организацисен хаҫачĕсем, Петэн Франципе тавăрăнинне Гитлер чеелĕхĕ пулать тесе хакласа, Петэна халех суд тума ыйтаççĕ.

Юпа çĕршывра хроники

* Италин патриочĕсем Çурçĕр Италире Германи фронтĕн тылĕнчи пур районсенче те активлă операцисем пуçласа янă.

* Париж хулин çар губернаторĕ тата Сирипе Ливанăн верховнăй комиссарĕ пулса ĕçленĕ Денц генерала немĕç оккупантчĕсене пулăшнăшăн вĕлермелле туна. унăн чинĕсене каялла илсе, пĕтĕм пурлăхне туртса илмелле туна.

* Дани патриочĕсем, нимĕҫсен кăмăрак тиенĕ суднисене Копенгаген портĕнчен кăларас мар тесе, порта кĕрекен каналра икĕ судна шыва путарнă. Нимĕç суднисем тара Копенгагенпах тарса юлнă.

* Канадăн 1943 çултанпа Италин фронтĕнче пулнă 1-мĕш корпусне ун сумне çаннă специальнăй çарсемпе пĕрле Тăрăмăн Европа фронтне куçарнă. Вăл корпус малашне Канадăн 1-мĕш армине кĕрет.

* Америка пичечĕ союзниксем ярса тытнă нацистсен фон Папена, Круппа, фон Колена, Цапа тата Вильгельм принпа халех наказани пама шутлать. Вĕсем нацистсене власа тытса илме пулăшнă, нацистсене ӳкса-тенкĕ парса тăнă, çавăн пирки те ретĕм темиçе миллион европеецса кăтартнă харушлăхсемшĕн тивĕçлипе ответ тытмалла.

* Тегеранра «Хĕрлĕ Çар 10 хут пырса çаннă» ятлă фотоҫкерчĕксен выставки ӳçăнă. Выставка Хĕрлĕ Çар 1944 çулта паттăрăн наступлени тунине кăтартса парать.

* Норвеги патриочĕсем Осло хулин епископне тата Норвеги чиркĕвĕн квислинга хирĕç кĕрешекен юхăмĕн руководительне Эйвиндер Бергграв доктора ирĕке кăларнă. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

*) Юлашки. Пуçланăшĕ «Чăваш Коммунин» 80-мĕш номерĕнче.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуҫалăх пайĕн — 5—31, 3—99, издательство конторин — 0—23.

НТ 00583

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000